**Вĕри çĕлен**

(Аса илӳ)

Вĕри çĕлен (вĕре çĕлен) каçхине тĕттĕм тӳпе тăрăх ярăнса, вут-хĕм сапса вĕçсе çӳрет. Вĕри çĕлен тĕне кĕртмесĕр вилнĕ е вăрттăн çуратса вĕлернĕ хĕр ачисенчен пулать тет. Вĕри çĕлен каччăсемпе хĕрсене е çамрăкла тăлăха юлнă арăмсене ерсе вĕсене хĕне ярса вĕлерет тет. Çамрăк арçын е каччă мĕнле те пулин хĕре хытă юратса ăна качча илеймесĕр юлнă пулсан тата çавăн пекех хĕр-упраç е çамрăк арăм пĕр-пĕр арçынна чунтан юратсан та ăна качча каяймасăр юлнă пулсан юратупа кулянса пураннă вăхăтра вĕсене вĕри çĕлен ерме пултарать. Каччă патне вара çĕрле çав вĕри çĕлен хăй чунтан юратнă хĕрĕ пулса пырать тет. Хĕрсем е çамрăк арăмсем патне вăл хăйсем юратакан арçын пулса пырать тет. Савни пулса пынă вĕри çĕлен — хĕрпе е каччăпа çĕрĕпех пĕрле пулать, ернĕ çынсене вăл ыталать, чуп тăвать, чăн-чăн савни пекех пулса унпа пĕрле выртать тет. Çамрăксене вăл çывăрма та памасть, çакăн пирки вĕри çĕлен ернĕ çын ывăнса çитсе хĕне (чире) каять, юлашкинчен вĕсене вĕлерсе те пăрахать тет. Хĕрарăма ернĕ вĕри çĕлен, унăн савни пулса пынăскер, ăна час-часах хĕнет те асаплантарать тет.

Вĕри çĕлен хăй ернĕ çамрăксене çĕрле пыни çинчен никама та калама хушмасть, çынна каласа парсан вăл вĕсене вĕлерес пек хĕнет тет. Ун пек чухне вĕри çĕлен ернĕ çын патĕнче хăраман çынсен пăшалпа е тимĕр тавраш тытса вăрттăн хурал тăмалла. Хурал тăнă чух çеç вĕри çĕлен пыма пăрахать тет.

Акă пĕр тĕслĕх.

Анаткасри Алтык Сахарĕн Анюк ятлă пĕртен-пĕр хĕр çитĕннĕ. Яштăм пӳлĕ те хитре хĕр пулнă вăл. Анюк Микихвер ятлă каччăпа туслă пураннă. Микихверĕ те хӳхĕм каччă пулнă. Анюка вăл чăннипех те юратнă пулмалла. Анчах та Микихвер ашшĕ пуян пулнă, Анюкăн ашшĕ-амăшĕ чухăнрах пураннă. Çавăнпа та Микихвере ашшĕ Анюка илтермен, урăх ялтан хăй пекех пуян çын хĕрне илсе панă: Улталанса юлнă Анюк Микихвершĕн хытă куляннă, хуйхăрнă, ăна вăл нимпе те манма пултарайман. Çак вăхăтра вара Анюка вĕри çĕлен ернĕ. Анюк çуллахи каçсем пĕр-пĕчченех шур кĕлетре çывăрнă пулнă та, ун патне кашни каçах вĕри çĕлен Микихвер пулса пынă. «Эпĕ сана çаплах юрататăп, Анюк. Атте-анне ирĕксĕр илсе панă арăма хуса яратăп, вара санах качча илетĕп», — тесе ĕнентернĕ вăл Анюка... Анюк ăна ĕненнĕ, ку чăн-чăн Микихверех ман пата каçсерен вăрттăн килет тесе шутланă вăл. Çакна пула Анюк часрах Микихверпе пулас

тесе каç пулсанах кӗлете çывăрма кайма васканă. Унта вара Микихверӗ пырасса кӗтнӗ. Вӗри çӗлен Микихвер пулса пырсан вăл унпа калаçнă, кулнă, макăрнă. Эрне хыççăн эрне иртнӗ — Анюк типсех, начарлансах пынă. Ашшӗ-амăшӗ вăл хӗнлӗ чире кайнине пӗлнӗ. Пӗррехинче, тӗттӗм каç, Анюк ашшӗ пăлтăр умӗнче шухăша кайса ларнă. Сасартăк тӗттӗм тӳпе тăрăх вут-хӗм сирпӗтсе вӗри çӗлен ярăнса пыни курăннă. Вăл урам урлă, кил картишӗ çийӗн вӗçсе иртнӗ те хăйсен анкартинех анса çухалнă. Сарай ӳрлă çил вӗçсе иртнӗ пек, темскер вашăлтатсă илнӗ, унтан кӗлет алăкӗ уçăлса хупăнни илтӗннӗ. Çӳçенсе кайнă Сахар хăра-хăрах хӗрӗ çывракан кӗлет пуçне кайса тăнă. Кӗлетрен мăкăртатса калаçнисем илтӗннӗ.

— Ах, Микихвер... чунăмçăм! Сана кӗтсе ывăнтăм, — тесе юншахланă унăн хӗрӗ Анюк. Вăл юрату сăмахӗсем каланă, Микихверне часрах качча илме тархасланă.

Хăраса кайнă Сахар пӳртне чупса кайнă та арăмне вăратнă, ăна хăйсен хӗрӗ кӗлетре Микихверне калаçни çинчен каласа панă. Вӗсем вара васкасах иккӗш те кӗлет патне кайса тăнă. Ку вăхăтра хӗрӗ, Анюк, хӳхленӗ, йӗнӗ, вăхăчӗпе кулнă, вăхăчӗпе макăрнă. Арçын сасси илтӗнмен.

Сахарпа арăмӗ кӗлет алăкне шаккама пуçланă. Анюк шăп пулать. Ăна алăка уçма хушаççӗ. Анюк уçмасть. Ашшӗпе амăшӗ алăка хирсех уçса кӗреççӗ те хӗрӗ вырăн çинче пӗчченех макăрса выртнине кураççӗ.

— Кампа калаçатăн эс! Текех Микихвере асăнатăн? Ăçта кунта Микихвер? — тӗпчет унăн ашшӗ.

Хӗр ашшӗнчен вăтанса ăна ним те каламасть. Кайран, тепӗр кунне, вăл амăшне кăна каласа парать: «Ман пата кашни каçах Микихвер вăрттăн çӳрет. Вăл мана качча илетӗп тесе тупа тăвать», — тесе каласа парать вăл хăйӗн амăшне.

Амăшӗ çакăн çинчен хăй старикне каласа парать. «Çук, çук!.. Микихвер килме пултараймасть. Вӗри çӗлен вӗçсе килнине хăм куçпа хам куртăм. Вӗри çӗлен ернӗ ăна. Куратăн, енле типсе-хăрса ларчӗ хӗрӳ», — тенӗ Сахар хăй арăмне. Вӗсем хӗрне пӳрт çенӗкне куçса хăйсемпе пӗрле çывăрма хушнă. Анюк итлемен: «Эпӗ Микихверсӗр пурăнаймастăп», — тенӗ вăл.

Çакăн хыççăн Сахар кӳршĕрен пăшал тупса кĕлет умĕнче кашни каç хурал тăма пуçланă.

Пĕррехинче кантăрла уйра тырă вырса ывăннă Сахар хурал ларнă çĕртех выртнă та çывăрса кайнă. Ирхине кĕлете кĕрсе хĕрне пăхать те тĕлĕнсех каять: Анюкăн пĕтĕм пичĕ-куçĕ чăрмаланса пĕтнĕ, кăвакарнă, юнланнă.

— Мĕн пулчĕ, Анюк? Кам хĕнерĕ-и капла сана? — ыйтнă унтан ашшĕ.

— Микихвер хытă хĕнесе хăварчĕ, — тенĕ вăл йĕре-йĕре.

— Мĕншĕн апла хĕнет? — тĕлĕннĕ ашшĕ.

— Вăл ман пата вăрттăн килсе çӳренине аттене каласа патăм, çавăнпа хĕнерĕ. Çынсене калама хушманччĕ. Эпĕ каларăм... Халь ĕнтĕ вăл мана вĕлерес пек хĕнерĕ те урăх нихçан та килместĕп тесе хăварчĕ тенĕ те Анюк сасăпах ӳлесе макарнă.

Ашшĕ Микихвер çӳренине ĕненмен.

— Хĕрĕм, сана усал ернĕ... Турра кĕл ту... Микихвер мар вăл — вĕри çĕлен сана çапла асаплантарать, — тенĕ Сахар хăйĕн хĕрне.

Хĕрĕ ăна çаплах ĕненмен, ман пата чăн-чăн Микихверех килсе çӳретчĕ тесе ĕнентерме тăрăшнă вăл.

Çакăн хыççăн хĕр патне вĕри çĕлен аннине урăх пĕртте курман, хĕрĕ те Микихвер таках мана пăрахрĕ тесе тунсăхланă, хуйхăрнă. Пĕр-икĕ çул асапланнă хыççăн хайхи Анюк начарланса вилсе кайнă.

*Элкер, С. Вĕри çĕлен : [аса илӳ] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 277-279.*